# Илемлĕхе курма пӳрнĕ ача

Энтьука урама тухма памаççĕ тантăшĕсем, таçтанах кăшкăраççĕ вара: «Тымар Энтьукĕ! Тымар Энтьукĕ!» Ăçтан пуçланчĕ-ха çак пăтăрмах?

Çуркунне, пĕр канмалли кун, Энтьуксен отрядне колхоз пахчине илсе кайрĕç. Чие йывăççи ытлашши хунанă имĕш. Йывăççи чăнах çапласкер ĕнтĕ, ирĕк парсан пĕтĕм сад пахчине пусать. Колхоз пахчаси кăклама шутлана чие тĕпĕсене. Çавăнпа та чĕнтерет те вăл шкулти чи хастар пионер отрядне.

Часах хĕрӳ ĕс пуçланчĕ пахчара. Хăшĕсем чиене çинçешке хунав вуллисенчен тытса çаплипех тăпăлтарса кăлараççĕ, теприсем — кĕреçепе чавалассĕ, виççĕмĕшсем — кăкланă тĕмсене çырма тĕпне йăтса тăраççĕ.

Энтьук аллинче кĕреçе вылять. Çамки çине тар тухиччен ĕçлерĕ вăл. Урана тапса кĕртнĕ чух, пĕррехинче, кĕреçе нач! турĕ. Энтьук тăпăлтарса кăларнă тымара чăр-р пăхрĕ. Тимĕр кĕреçе тымар хуппине сӳсе антарнă. Сăнаса пăхрĕ Энтьук тымара. Темиçе йӳп. Сасартăк çак тымар темшĕн упăте çури пекех туйăнчĕ. «Жанна!»— чĕнчĕ вăл каркаланчăк тымара.

Çуллахи каникул вăхăтĕнче Шупашкарта Энтьук куçса çӳрекен зоопарка кĕрсе курнăччĕ. Пысăк читлĕх умĕнче юлташĕсемпе нумайччен кĕпĕрленсе тăнине халĕ те астăвать. Читлĕхре пĕчĕкçеç упăте урла-ширлĕ карнă паявсем тăрăх савăнăçлăн сиккелесе çӳретчĕ. Ăна пурте «Жанна!» тесе чĕнчĕç.

— Ме канфет, Жанна! — терĕ тахăшĕ. Чалт пăхрĕ упăте. Читлĕхĕ икĕ хутлă пулин те, ăсла чĕр чун пралуксем хушшипе аллине тăсрĕ. Пылака юратать пулас. Йăпăр-япăр çӳле хăпарчĕ, канфета хутран тасатрĕ. Канфета хучĕпех çиме юраманнине ăнланать. Читлĕхе темшĕн тата пĕчĕк тĕкĕр лартса панă. Канфет çине хыççăн, çутă тĕкĕрпе тытанчĕ выляма Жанна; ăна хӳри çине те, хырăмĕ çине те, алли çине те хурса пăхать. Нумайччен култарнăччĕ упăте куракансене.

Энтьук пăхса ытараймасть тымара. Йывăç тунинчен касрĕ. Савăннипе кăшкăрса ячĕ:

— Ачасем, килĕр-ха курма! Упăте чавса кăлартăм!

Карах пухăнчĕç тантăшĕсем.

— Ăçта упăте? Кăтарт! — кĕрлеççĕ. Юлташĕн аллинче мĕнпурĕ те тымар çеç.

— Тăнтан суланнă вăл! — ĕрлешет пускил Çитăрĕ.

Чĕлхи çивĕч Çитăрăн, усал ят туртса кăларма та ăста вăл.

— Тымар Энтьукĕ, Тымар Энтьукĕ! Ха-ха-ха.

Нихăшĕ те тымарта упăте кĕлетки курасшăн пулмарĕ. Çитменнине, ахăлтатсах кулчĕç пурте унран.

Энтьук тымара пĕтĕм ачасем умĕнчех кĕсйене чиксе хучĕ шаларах.

Мĕн хăтланнă-ха вăл киле таврăнсан? Тымара суса тасатнă шывпа. Ку пĕрре. Чăпăл тунă хыççăн упăте ĕнĕк тĕслĕрех курăнма тытăннă. Каскаламасăр калăп та пулмасть. Тĕрĕс. Палăрса çитеймен хăлхисене çĕçĕпе, ийĕпе, йĕкевпе ӳстерчĕ. Куçĕсене уçмалла. Амăшĕн арчинче вĕтĕ шăрça нумай. Куç лупашкисене чавса тарăнлатсан, çилĕм сĕрсе пĕчĕк кăна шăрça çыпăçтарчĕ. Упăтен халĕ ытармалла мар хура йăлтăркка мăшăр кус.

Шакла пуçа юратмаççĕ вара чăвашра. Кукша пуç ватă сăн парать. Илемлĕ калпак — чиперлетет. Йĕкел курланки шăпах уншăн — чаплă тухӳя.

Асламашĕ курчĕ те шарт çапрĕ икĕ пĕççине.

— Ара, ку упăте çурине ăçтан тупрăн? — тет тĕлĕннипе.

Саванчĕ Энтьук. Ватă куç пулин те, тӳрех уйăрса илчĕ, юлташĕсем вара чухлаймарĕç. Вăл йăлтах каласа паче асламăшне. Ачасем хăйĕнчен кулнă саманта та пытарса хăвармарĕ.

— Э-э, ачам, ан кулян. Вĕсем кулнине йывăра ан ил. Илеме курма кашнине пӳрмен.

Ывăлĕ асламăшĕпе калаçнине илтсен, амăшĕ те пырса тăчĕ.

— Мĕн пит хатарлă пуплетĕр?

— Кур-ха, ывăлу мĕн ăсталанă! Чăн-чăн упăте. Тымартан.

— Ха, пах-ха эсĕ ăна. Чаплă пике тейĕн, тухъяллă,— мухтать амăшĕ.

Çакăн хыççăн Энтьук кашни тымартах мĕн те пулин: е йытă пуçĕ, е кавакал курчĕ. Çын кĕлеткине аса илтерекен тымарсем те тупăнчĕç. Тăпăлтарса пăрахнă пĕр хăрăк тымара тытса пăхмасăр иртеймест вăл. Вăл çырма-çатра тăрăх, анкарти хыçĕсемпе хăрăк тымар пуçтарса çӳренине ачасем час-часах курчĕç. «Тымар Энтьукĕ» тесе чĕннинчен хăтăлаймарĕ вăл, çак ят çирĕпленсе юлчĕ. Ку çеç-и? Амăшĕн ятне те манчĕç этемсем; «Тымар Энтьукĕн амăшĕ» теççĕ. Çапла чĕнме тытăнчĕс. ялти ятлă хĕрарăма. Ку ята та пускил Çитăрех туртса кăларчĕ.

Теплерен амăшĕ ял çинче хăйне çĕнĕ ятпа чĕннине пĕлет. Лекрĕ вара ывăлне: кил-çуртра пĕр тымар юлмарĕ.

— Аллу тытнă ан пултăр тек тымар таврашне! Çитет! Мăй таран намăса кĕртрĕн,— терĕ вăл ывăлне.

Энтьукăн тымара чун кĕртмесĕр кăмăлĕ тулмасть. Амăшĕ ĕçре тытăнса тăни уншăн — уяв. Вăрттăн, шикленкелесе нумай ăсталан-и? Çапах та хыпăнса ӳкмерĕ вăл. Часах çуллахи каникул пуçланмалла. Пионерсен лагерьне кайĕ. Унта никам та чăрмантармĕ. Варманта тымарĕ те тупăнать тем тĕрли.

Кама савăнтармĕ ĕнтĕ çуллахи каникул. Ачасем пĕлеççĕ: пионерсен лагере ешĕл вăрман уçланкинче, çавра кӳлĕ хĕрринче вырнаçнă. Хăйĕн хуçисене йышăнма хатĕр вăл. Йышпа канма мĕн тери ырă.

Акă, вăхăт çитрĕ. Пионерсен лагерьне ăсатаççĕ ачасене. Энтьуксен килĕнче те тĕпĕртетӳ. Амăшĕ, ятарласа ĕçрен ыйтса таврăннăскер, ывăлĕн кĕписене çуса типĕтрĕ. Асламăшĕ кăмака умĕнче кăштăртатать.

Амăшĕ ывăлĕ сак çине илсе лартнă чăматанне уçрĕ те утюгпа якатнă кĕпе-йĕмне хума пикенчĕ. Пăхре те çелен курнăн кашкарса ячĕ:

— Энтьук! Каллех çак ăпăр-тапăра лагере илсе каятăн-и? Унта та хăвăн айванлăхна кăтартма шутлатăн-и?

— Мĕн хунă, ара, чăматанне? — хутшăнмасăр юлмарĕ асламăшĕ.

— Хăйĕнчен ыйт, — çиллессĕн каларĕ кинĕ.

— Нимех те мар,— хаюсăррăн çăвар уçрĕ Энтьук. — Çĕçĕ, çилĕм, лак, ийе, йĕкев. Тен...

— Тымар тупап, тетĕн-и? Эх! — хăтарчĕ амăшĕ. — Мĕн тума кирлĕ текех кĕлеткесемпе аппаланма? Тантăшусем йĕкĕлтенине мантăн-им? Вула кĕнеке ытларах. Вĕрен, çынна тухăн.

Энтьук амăшне хирĕçлемест.

— Куçăм ан куртар, тасат чăматанна, — хытарсах каларĕ амăшĕ.

Ывалĕ хăрамаллипех хăрарĕ. ĕмĕтленни сая кайма пултарать. Пĕлет вăл амăшĕн кăра çиллине.

Яланхи пекех халĕ те аслăмашĕ мăнукĕ хутне кĕчĕ:

— Вылятăр-иç, ача чухне кăна выляни. Вăйăра вĕсен ырă кăмăл, илемлĕх туйăмĕ аталанать. Каскалатăр. Каскалама пĕлмен алă-уран чĕрни вĕçне шăрпăк кĕрет.

— Килĕшместĕп. Илтес килмест «Тымар Энтьукĕн амашĕ» тесе чĕннине. Ятăм пур — Укçине. Çав ятпа чĕнччĕр.

Кинĕпе тавлашса усси çуккине аван чухлать ватти. Вăрттăн куç хĕсрĕ Энтьука. Çамрăкки ăнланчĕ. Вăл ним шарламасăр япалисене илет те алкумне чăмать.

Виççĕшĕ те килтен тухрĕç. Клуб умĕнче машина тăрать, лагере лартса каять вăл ачасене.

Энтьук ҫӑмӑллӑн утать. Аллинче — чӑматан. Хушӑран асламӑшӗ ҫине пӑхса илет. Йӑл! кулаҫҫӗ вӗсем иккӗшӗ. Чеескер карчӑк. Кинӗ сисиччен мӑнукӗн шӑкӑр-макӑрне пӗтӗмпех чӑматана хунӑ.

***

Вӑйлӑ ҫил тӳпере хулӑн пӗлӗтсене каллӗ-маллӗ хӑвалanӑ вӑхӑтра кичем лагерьте. Шыва кӗме чараҫҫӗ. Ҫыран хӗрринчи хӑйӑр ура тупанне пӗҫертмест, выртса йӑваланма мар, пусас килмесг ҫарран ун ҫине. Сумӑр ҫӑвать тӑтӑшах. Ӑҫта пытаннӑши ачасен тусӗ — хӗвел? Пуҫсем усӑннӑ, ним патне ал-ура ҫыпҫӑнмасть ҫакнашкал ҫанталӑкра.

Энтьук хуйӑха ерчӗ, чунӗ таҫта туртӑнать.

Пӗр ирхине аслӑ хӗвел аса илчӗ пулас шавлӑ ачасене. Вӑл ҫуталса тухрӗ те лагерьти тетте ҫуртсен чӳречисенчен йӑлтӑртаттарса пӑхрӗ. Пурте ҫывӑраҫҫӗ-ха. Хӗвел хӑйӗн шевлине ачасен пит-куҫӗ ҫине ачашшӑн сапаларӗ. Капла кам вӑранмасӑр выртӑр? Йышлӑ халӑх сиксе тӑчӗ те чупса тухрӗ урама. Мӗн тери лайӑх кун паян! Сиккелес, чупас, кулас килет.

Апат ҫисен вожатӑй ҫапла пӗлтерчӗ:

— Пуҫтарӑнӑр, ҫырлана каятпӑр!

Аранах! Сереперен кайӑк вӗҫерӗннӗн, ҫунатланчӗҫ пионерсем. Савӑт-сапа илсе, отряд ҫула тухрӗ. Ӑҫтан шӑппӑн утан ушкӑнпа. Параппан, горн сассипе, юрӑпа аслӑ вӑрман янратӑр.

Умра уҫланкӑ. Чупрӗҫ темиҫен. Сиркелерӗҫ курӑка. Сарлака ҫулҫӑсен айӗнче — хӗрлӗ шарҫа ярапи. Тусеймерӗҫ сас памасӑр:

— Ҫырла!

Вӑштах сырса илчӗҫ уҫланка ачасем.

Уҫланкӑ хура курпунлӑ. Мӗнле тӗмескепе витӗннӗ, ара? Ҫапӑ куписем. Акӑ мӗн. Ҫапӑ купи тымарсӑр мар. Ытарлисене тупма пулать эппин. Энтьукӑн савӑннипе чӗри тухса ӳкесле талт-талт тапса илчӗ, тути те йӑл-л та йал! кулать. Анчах ӑна никам та асархамарӗ.

Сахал-и, нумай-и хӗвел анӑҫалла шурӗ, Энтьук сисмерӗ ӑна. Вӑл темиҫе купа салатрӗ, пухрӗ. Хӗрӳ ӗҫрен ӑна горн сасси уйӑрчӗ. Эппин, пӗр ҫӗре пухӑнса киле кайма вӑхат. Энтьук пухнӑ хӑрӑк тымарсене пурака хучӗ, унта кӗменнисене алӑпа майласа тытрӗ. Пӑхать, пионерсем — стройра. Пырса тӑчӗ вара чи юлашки рете.

— Сан ҫырла ӑҫта?— ыйтрӗ юнашарти хӗрача.

Ҫывӑхрах Ҫитӑр тӑрать. Пӗтӗм сасӑпа ахӑлтатса кулса ячӗ.

— Тымар Энтьукĕ, çырла палламасть. Сыхланăр, вал тымар чирĕпе чирленĕ.

Строй пăсăлчĕ. Пурте Энтьук тавра пухăнчĕç. Чăр-р пăхаççĕ ачасем пуракри, алăри тымарсене. Пĕрисем Çитăр пекех ахăлтатаççĕ.

— Энтьук! Сĕтпе çырла лекмест сана паян! — Калаçма чарăнмасть Çитăр. — Тымар чăмлама тивет!

Ку хутĕнче пурте Çитăр сăмахĕсенчен кулчĕç. Вожатăй çитрĕ.

— Мĕн пулна?— ыйтрĕ хайхискер.

— Энтьук шуйлантарать пире, — паттăрланчĕ каллех Çитăр.— Ямăттине хапсăнать, хăй çырла татас вырăнне хăрăк тымар пухнă. Килте те ăна çавăншан амăшĕнчен пĕçеркке лекет. Ял-йыш та ăна «Тымар Энтьукĕ» тесе йĕкĕлтет.

Çиййĕнчех тавçăрчĕ вожатăй. Вăл Çитăр куçĕнчен пăхса çапла каларĕ:

— Çынран кулаканскер — ăссăр тата айван чунлă.

Шăпăртах пулчĕç ачасем. Тепĕр самантран ачасем стройпа вырăнтан тапранчĕç.

Энтьукăн икĕ алли те пушă мар, утма йывăртарах ăна.

— Кӳр, хама пар пуракна, — тет вожатăй Виктор Иванович. — Эсĕ тымарсенчен кĕлеткесем тăватан-и?

Темшĕн чĕмсĕртерех ӳсет Энтьук. Амăшĕ те тарăхать çавăншăн. Халĕ те аслă тусне тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парас вырăнне «аха» терĕ çеç.

— Лагерьте хĕрлĕ кĕтес пур. Ĕçле çавăнта, сана унта никам та чăрмантармасть.

* * *

Пурнăç хаваслă чух кун иртни сисĕнмест. Мĕнле кăна вăйа выляман-ши лагерьте! Тепрехинче пионерсем уяв irtтерме хатĕрленчĕç. Кашниннех хайĕн пултарулăхне кăтартса памалла. Пултарулăхсăр çын çук. Пĕри юрлама маттур, тепри — ташлама, виççĕмĕшĕ — ӳкерме е мĕн те пулин ăсталама. Уяв ячĕпе кӳлĕхĕрринче савăнăçлă костер ялкăшмалла. Кунта ачасен алă ĕçĕсене кăтартса паракан выставка уçăлать.

Канмалли кун. Çавна май лагерьте ачасен ашшĕ-амашĕсем йышлă. Пурте уяв пуçланасса кĕтеççĕ.

Энтьук амăшĕ те килнĕ. Ывăлĕнчен шит уйрăлмасть. Паллах, тунсăхланă. Кучченеç илсе килнĕ, сăйлать кăна.

— Костер чĕртиччен выставка курма чĕнетпĕр! — пĕлтерчĕ вожатăй Виктор Иванович.

— Анне, киле пыратăп эпĕ те. Атя, — чĕнчĕ Энтьук.

— Чипер пул-ха, ачам, — терĕ лешĕ. — Кунта пуранăç япăх-и-мĕн?

Выставкăна илсе каясшăн мар Энтьук амăшне. Шикленет ятлаçасран. Выставкăра хăрăк тымартан хатĕрленĕ виçĕ япала ун: «Хаюллă хĕрлĕ армеец», «Тăмана» веçен кайăк тата «Чăпăркка» — кăлăк чаххи.

Амăшĕ выставкăра хăй ачи тымарсенчен хатĕрленĕ кĕлеткесене курасси çинчен шутламасть те-ха. Çынсенчен юлас мар шутпа çеç утрĕ вăл. Хыçра Энтьук утать, мăшлатса.

Халăх уйрăмах пĕр сĕтел умне кĕпĕрленсе тăчĕ. Тахăшĕ сасăпах çырса хунине вулать: «Энтьук пионерăн хăрăк тымартан тунă япалисем».

Илтрĕ те çакна Укçине, тулхăрса кайрĕ. Ывăлĕ мĕнле япала ăсталанине курмарĕ, ăна аллинчен ярса тытрĕ те айккинелле танкăлтаттарса кайрĕ.

— Итлемерĕн пулать аннӳне, — тет çиллес сасăпа.— Киле пынă ан пул. Эпĕ, ăна хĕрхенсе, ĕç пăрахса килетĕп, вăл мăшкăлпа кĕтсе илет.

Пуçран çапнă пек талпăнчĕ аслă çул еннелле. Каллех хăйне «Тымар Энтьукĕн амашĕ» тесе чĕнесрен именчĕ вăл. Сул çине тухсан, килелле мар, тепĕр еннелле утрĕ. Ăша пусармалла, ăс ыйтмалла пиччĕшĕ патне çитесшĕн хĕрарăм. Ахалех васкарĕ. Çынсен калаçăвне итленĕ пулсанах кăмăлĕ çаврăнатчĕ ун.

Энтьук амăшне йăпатма пĕлмерĕ. Палатăна кĕчĕ те кравать çине выртрĕ, юхса анакан куççульне çăта-çăта.

Ку вăхăтра Энтьук экспоначĕсене ачасем те, çитĕннисем те куç илмесĕр пăхаççĕ, кашниех çакнашкал тымар ӳснинчен тĕлĕнет.

Тымарĕ ӳсĕ-ха, анчах ăна курма, ăна чун кӳртме пĕлмелле. Çакна вара илеме курма пӳрнĕ тата ылтăн алăллă ача кăна ăсталама пултарать.

—«Хăюлла хĕрлĕ армеец», — вулать сарă çӳçлĕ хĕрача, экспонат çумне çырса çыпăçтарнă хута. — Мĕншĕн çапла ат панă? Атте, ăнлантар-ха.

— Эсĕ, хĕрĕм, лайăххрах пăх,— тет ашшĕ. — Ав, вăл епле кăкăрне каçăртса мăнаçлăн тăрать. Вăрăм шинель тăхăннă. Пуçĕнче хĕрлĕ çăлтăрлă буденовка. Асăрха, куçĕсем епле çивĕч. Уншăн нимле тăшман та хăрушă мар. Пĕрре пăхсах чухлан: вăл — хăюллă хĕрлĕ армеец! Кунта художник пултарулăхне мухтамалла. Вăл чăннипех хĕрлĕ армеецăн хăюлăхне кăтартса пама ăсталăх çитернĕ.

Хӗрача ашшӗн сӑмахне ыттисем те каҫса кайсах итлеҫҫӗ, унсӑрӑн шӑпӑрт тӑмӗччӗҫ. Тахӑшӗ ассӑн сывларӗ. Ҫаварӑнса пӑхрӗҫ вӑштах. Хыҫалта ватӑ хӗрарӑм тарать, манукӗ патне килнӗскер. Итленӗ май, вӑл хӑйӗн ҫывӑх ҫыннине, вӑрҫӑра пуҫне хунӑскерне, асне илчӗ-тӗр.

Малалла куҫрӗҫ куракансем. Турат ҫинче «Тӑмана» ларать. Куҫӗ ун — йӗрӗлче пек ҫап-ҫаврака. Тӗсӗ хӑмӑр, ӑна сухӑртан якатса ҫыпӑҫтарнӑ.

— «Чӑпӑрккине» кур-ха, атте! — тет паҫӑрхи сарӑ ҫӳҫлӗ хӗрачах. — Пуҫне мӗнле ҫӗкленӗ, мӑйӗ кӑрkканни пекех вӑрам. Каснӑ-лартнӑ пирӗн килти кӑлӑк чӑххиех. Тӗкӗсем, тӗкӗсем мӗнлерех! Хӑмӑр хӗрлӗ, йӑмӑх хура тата йӑлтӑркка.

Энтьук тымара лакпа сӗрнӗ, савӑнпа та йӑлтӑртатать «Чӑпӑркка».

— Мӗнле мӑнтӑр вӑл, пӗсехи тӑп-тулли, — хӑйӗнчен хушса каларӗ ашшӗ. — Умне сапса панӑ тулӑ пӗрчисене сӑхма васкас ҫук, чӗпписене хурчака ҫӗклесе каясран сыхлать.

Ҫав вӑхӑтра вожатӑй улӑм шӗлепкеллӗ, хулпуҫси урлӑ фотоаппарат ҫакнӑ ҫынпа ҫитсе тӑчӗ.

— Сирӗлӗр-ха кӑшт, — хушрӗ вӑл. — Энтьук экспоначӗсене корреспондент пионерсен хаҫачӗ валли ӳкересшӗн.

Сынсем икӗ енне чакса тӑчӗҫ. Корреспондент аппарачӗпе ун пек те, кун пек те тытса чаклаттарчӗ.

— Хуҫи те тӑтӑр-ха юнашар, — тет корреспондент. Кӑн-кан пӑхкаларӗҫ пурте.

— Энтьук ӑҫта? — ыйтать ачасенчен вожатӑй.

— Анчах кунтахчӗ,— тет пӗри.

Сынсем хушшинчен чавсипе чышкаласа Ҫитӑр тухрӗ.

— Ӑна амӑшӗ ятлаҫса пӗтерчӗ. Выртать палатӑра, ӳлесе, — терӗ вӑл.

Вожатай чупрӗ каланӑ ҫӗре. Тепӗр самантран Энтьукпа таврӑнчӗ вӑл. Фотокорреспондент вара ҫамрӑк художника апла та, капла та тӑратса ӳкерчӗ.

* *

Таврӑнман-ха киле лагерьтен Энтьук. Анчах ун сӑнукерчӗкне ҫапса кӑларнӑ хаҫат — сӗтел ҫинче, ав. Шалт тӗлӗнет амӑшӗ. Мухтанать асламӑшӗ. Хаҫатра мухтаса ҫырнӑ. Энтьук хӑрӑк тымартан ӑсталанӑ кӗлеткесене Мускава, выставкӑна, янӑ. Хӑйне, Энтьука, художниксен шкулне вӗренме илнӗ.

Пӗтӗм ял-йыш вулать хаҫата тӗлӗнсе те савӑнса.

Укçине капăр кĕпе тăхăнчĕ те çула тухрĕ. Ывăлĕ патне лагере каять. Аллинче ун ещĕк. Лапккара туяннă. Хаклă парне. Ещчĕкре аста алăсем валли ятарласа кăларнă ĕç хатĕрĕсем.

Хаçата, ырă кăмăллă çынсене тав туса пычĕ хĕрарăм. Ачи пултаруллă ӳсни — пысăк телей.

Энтьук та ларма-тăма пĕлмест паян. Йăлт та йалт пăхать уялла. Часах вăл лагерь çулĕ çинче амăшне курать. Хапхаран тухса вăркăнчĕ вара. Амăшĕ те курчĕ ачине, уттине хăвăртлатрĕ. Тĕл пулчĕç те ĕмĕр курман пек ыталаса илчĕç пĕр-пĕрне.

*Эльби, В. Илеме курма пӳрнĕ ача : [калав] / В. Эльби // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 116-119.*